Ял хуçалăх аталанăвĕ наци проекчĕн çутинче

# Ĕнерхи кунпа ĕçлесси пире валли мар


Выльăх апачĕ хатĕрлемелли 290 лаша вăйлĕ «Дон-680М» комбайн.


250 лаша вăйлĕ «Акрос-530» «хир карапĕ» 9 метр сарлакăш каçалăк илет.


Америка тракторĕ «Джон Дир-8430» хирти ĕçсенче шанчăклă.


Çĕре 65 см тарăнăш кăпкалатакан «Гаспардо ГН-2,5» çĕр çинче шыв тăрасран пулăшать.

Раççейре «Агропромышленноçа аталантарасси» наци проекчĕ ĕçлеме тытăнсан çĕршыв ял хуçалăхĕ çинчен маннă текенсен çăварĕсем хупланчĕç: ĕçле паян, малашлăха пăхса çĕннине алла ил, хăвăн ĕçна инвесторсене явăçтар – çаксене тата ыттисене те çул уçма çĕршыв алă тăсса пачĕ. Пурнăçпа тата çĕршыв аталанăвĕпе тан пыракансен экономики çĕнĕ шайпа çĕкленнинчен тĕлĕнме кирлех-и? Хуравĕ пĕрре: çĕннине алла илекенĕн паянхи ĕç кăтартăвĕсене тата малашлăхне урăхла кураймастăн та. Вĕсен никĕсĕнче ӳсĕм паракан технологисемпе тата çĕнĕ техникăпа тухăçлă ĕçлени тăрать.

Кăçалхи çанталăк условийĕсене пăхсан ял хуçалăх культурисен тухăçĕ пысăк пуласси пирки никамăн та иккĕленӳ çук. Анчах ăна пухса кĕртмелле-çке!

Акнă тыр-пул ешерме тытăнсан, лартнă пахча çимĕçпе çĕр улми çитĕнме пуçласан республикăра «Уй кунĕ» йĕркелесси ырă йăлара ĕнтĕ. Ăна ЧР Ял хуçалăх министерстви ирттерет. Кăçал вăл çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче Çĕрпӳ районĕнче, Раççей ял хуçалăх академийĕн наукăпа тĕпчев институчĕн территорийĕнче, иртрĕ. Каламалла, кунта пулса курни ял хуçалăхĕ аталану çулĕпе вырăнтан тапраннине кăтартрĕ. Питех те шел, Муркашсем уявăн пĕрремĕш кунĕнче кунта сахаллăн пулчĕç. Ыйтусем çуралчĕç: е ытти районсем çĕннине тăрăшса шыраççĕ, е пирĕннисем кунти çĕнĕлĕхсенчен малта пыраççĕ, е вĕсем «Уй кунĕн» иккĕмĕш кунĕнче унта çитрĕç? Мĕнех? Ыйтусем çине кашни хăй хуравлать. Эпир вара çак кун курнă çĕнĕ техникăпа вулакансене паллаштарар. Малашлăха пăхаканшăн вăл иккĕмĕш вырăнта пулма пултараймасть.

«Уй кунĕ» – Республика кунĕпе çыхăннă мероприяти – икĕ куна пычĕ. Унта пулса курсан урăхла пулма та пултараймасть темелле. Мĕншĕн тесен кураври техникăна пăхса тухма, технологисемпе тĕплĕн паллашма, тĕпчев институчĕн хирĕнче кашласа ӳсекен тыр-пула пăхса хак пама пĕр кун çителĕксĕртерех. Çак курава ирттерни ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене, фермерсене унта килсе курса хаклă техникăна туяннă чух йăнăш тăвасран сыхланма пулăшать. Çĕрпӳри куравра çĕнĕ техникăна ĕçре те тĕрĕслеме май килни çĕр ĕçченĕсемшĕн уйрăмах паха пулчĕ теес килет.

– Курав хитре, илĕртӳллĕ. Хаклă техника уй-хирте еплерех ĕçлесси паянах аван курăнать. Çакна курса, хуçалăхри ĕç пĕтĕмлетĕвĕсемпе Раççей шайĕнчи «Уй кунне» хутшăнса 20 миллион тенкĕлĕх техника илме закас тăратас тетпĕр, – терĕ сăмах май Канаш районĕнчен килнĕ ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Кондратьев. – Ял хуçалăхĕн тĕрлĕ агрегачĕпе çĕр ĕçĕ тунă чух ĕçе мĕнле пахалăхпа пурнăçланине хаклама пур условисем те çителĕклĕ кунта. Вĕсене курса çĕнĕ шухăшсем çураласçĕ. Ĕçлеме пулать, ĕçлемелле кăна.

Чăнах та, мĕнле техника çук пулĕ кунта? Хамăр çĕршыври тата чикĕ леш енчи 40 ытла фирмăпа компани хăйсем туса кăларакан тракторсемпе машинăсене, агрегатсемпе оборудованисене кăларнă курава. Вĕсем хушшинче çĕре кăпкалатаканнисем, выльăх апачĕ хатĕрлекеннисем, хатĕр апата выльăхсене валеçсе параканнисем, çĕр улми çитĕнтерме пулăшаканнисем, утă-улăм тиеканнисем тата ытти те. Вĕсен пĕтĕмĕшле йышĕ 140 таранах. Энерги ресурсĕсене перекетлеме пулăшакан, паянхи кун шайĕнче тухăçлă ĕçлекен техникăна хуçалăхсене Чăваш Енри дилер компанийĕсем – «Чăвашагролизинг», «Белпро-Сервис», «Чăвашагрокомплект», «Агротехкомплект», «Агротрейдинг» – сĕнчĕç, техникăн вăрттăнлăхĕсемпе тата ĕçлес мелĕсемпе паллаштарчĕç.

– Çĕнни паян кашни утăмрах. Патшалăх пулăшăвĕ те уксахламасть. Анчах хăш-пĕр хуçалăх ертӳçисем çĕнĕлĕхсене алла илессипе пуçаруллă мар. Тĕрлĕ сăлтавсене пула вĕсем перспективлă сортсемпе ĕçлемеççĕ, паянхи кун шайĕнчи техникăна туянассине ырана хăвараççĕ. Патшалăх пулăшмасть теме сăлтавĕ çук. Акă пĕлтĕр, виçĕм çулхипе танлаштарсан, малашлăха пăхакан ял хуçалăх предприятийĕсемпе фермерсем тĕрлĕ çăмăллăхлă кредитпа çĕнĕ техникăна 800 миллион тенкĕлĕхе яхăн илнĕ, – терĕ курава пынă ЧР ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев.

Министр сăмахĕсемпе килĕшмесĕр майĕ те çук. Мĕншĕн тесен йĕркеллĕ, пахалăхлă ял хуçалăх культурине пысăк уйсенче алă вăйĕпех ăнăçлă туса илме паянхи кун май çукрах.

Чăваш Республикин Президенчĕ агропромышленноç комплексĕ умне лартакан тĕллеве те асра тытмалла паян: тепĕр икĕ çултан республикăра пĕр гектар çĕр те сухаланмасăр юлмалла мар. Ăна пурнăçлас тесен çĕнĕ техникăпа тата çĕнĕ технологипе ĕçлесе, ăна кура тупăш илсе ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене вăхăтра çителĕклĕ шайри ĕç укçипе тивĕçтермелле.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**


Великобританире кăларнă «GCB» погрузчк утă-улăм та купалайрать, пĕрене те çĕклейрет.


185 лаша вăйлĕ финн тракторĕ «Валтра».


Каллĕ-маллĕ çаврăнакан суха пуç ĕçлесе кăтартрĕ.


Итали тракторĕ «Ламборджини Р6120» 3 миллион та 600 пин тенкĕ тăрать.


Тырă акмалли комплекс çĕре кăпкалатать, акать, минераллă удобрени хывать, пусăрăнтарать. Сеялка сарлакăшне 5 метртан пуçласа 18 метр чухлĕ вырнаçтарма пулать.

# Юхăнушăн явап тытакан пур-и?

Пур çыннăн та ĕçе вырнаççан ответлăхĕ пулать. Пулать çеç мар, ĕçленĕçемĕн кунсерен ӳсет. Сăмахран, çын выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлет тейĕпĕр. Унăн выльăха çапса сусăртма юрамасть, çухаласран сыхламалла, чир-чĕртен пăхса тăмалла. Стройкăра ĕçлекенĕн хăрушсăрлăх техникине пăхăнмалла, строийматериала перекетлемелле, çанталăк условийĕсене кура ĕçлесе пымалла, ытти ĕçсем валли çул уçмалла. Уйхир ĕçченĕн тырă-пулăна вăхăтра акмалла, тулăх пăхса ӳстермелле, çухатусемсĕр пуçтарса кĕртмелле. Çурхи кун çулталăк тăрантарать тесе ахальтен каламан ĕнтĕ ваттисем. Çаксене пурнăçласан çеç çĕр ĕçченĕ хăйне лăпкă тытма пултарать.

Иртни асрах. 1971 çулхи çанталăк питĕ уяр та çумăрсăр тăнине пула колхозсемпе совхозсем патшалăх умĕнчи парăмсене татасси ыйтуллă тухса тăрсан патшалăх хуçалăхсене комбикормпа тивĕçтерме тăрăшрĕ. Вăл вăхăтра хуçалăхсенче выльăх йышне чакарса ярасран улăма Новосибирск, Курган облаçĕсенчен кӳрсе килме хушу пулчĕ. «За коммунизм» колхозĕнчен командировкăна кайса килсен Новосибирск облаçĕнче пирĕн «Новая Юнга» колхоз валли те улăм пурри палăрчĕ. «За коммунизм» хуçалăхăн пресс-подборщик пурччĕ, пирĕн пулман. Правлени ларăвĕпе мана унта каймалла турĕç. «Хамăра шаннă ĕçре тăван халăхăмăр умĕнче намăс курмăпăр», – терĕç те командăна пуçтарăннисем манăн ăшра тĕкĕ çуралчĕ, хушнă ĕçе пурнăçлассипе шанăç вăй илчĕ.

Вырăна çитсен пире пресс-подборщикпа та, апат-çимĕçпе те, пурăнмалли вырăнпа та тивĕçтерчĕç. Кун хыççăн эпир февралĕн çурринчен пуçласа мартăн 8-мĕшĕччен хамăр колхоз валли 120 тонна, пĕрле ĕçлекенсем валли 20 тонна улăм пресласа хатĕрлесе тата хамăр ене ăсатса яла чыслăн таврăнтăмăр.

1972 çулхине каллех типĕ те уяр çанталăка пула колхозăн утă-улăм çителĕксĕррине пĕчĕклетме Ставрополь крайне тухса кайрăмăр, 300 тонна улăм пресласа илсе килтĕмĕр. Çапла тĕллевлĕ ĕçлесе хуçалăхри выльăх йышне чакармарăмăрах.

Тепĕр 8 çултан каллех типĕ те уяр çанталăк пулчĕ. Ку хутĕнче Тюмень облаçĕнчи Социализмла Ĕç Геройĕ Прокопьев ертсе пыракан хуçалăха кайрăмăр. Унта та хамăр чыса вараламасăр 200 тонна улăм пресласа илсе килтĕмĕр, тăван колхоз аталанăвне тепĕр тĕкĕ патăмăр.

Паян иртнĕ вăхăта тата паянхи кунсене илсе танлаштаратăп та тĕлĕнетĕп. Аталаннă çĕршывра колхозсене «тĕппипе пĕтерес» шутпах пуль «Новая Юнга» хуçалăхăн пулнă машинăпа трактор паркне сутса салатса пĕтерчĕç. Юлашки çулсенче тыр-пул тасатмалли тата витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрлемелли агрегатсене те, фермăсене тата ял çыннисене çăнăх авăртса памалли армансене те, юсав мастерскойĕсене те, ферма çурчĕсемпе хуçалăхăн икĕ хутлă кантурне те «малалла» пăхакансем ватса-çĕмĕрсе-çаратса пĕтерчĕç. Вилнĕ выльăх çине тĕрлĕ хурт-кăпшанкă тапăннă пек халăх вăйĕпе тунă производство пӳлĕмĕсем паян вилнĕ чĕрчунсене аса илтереççĕ. Çапла пулмалла-ши вара? Мĕншĕн хуçасăр тăрса юлчĕç-ши çав çурт-йĕрсем? Халĕ кама явап тыттармалла уншăн?

Эпĕ хам Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ пулнă май юхăннă ялсемпе хуласене ура çине тăратнине те сахал мар курнă. Кунта вара халăх вăйĕпе çирĕп ура çине тăратнă хуçалăха вăрçăсăр-мĕнсĕр юхăнтарма пултарни куç умĕнче. Малалла мĕн каламаллине пĕлместĕп...

**И. ВАСЮХИН.**

Юнкăпуç ялĕ.